## ЙĂСĂРКА

Кутсăр-пуççăр çил-тăман
Çавра çил пек çаврăнса
Тĕнче тăрăх кустарать.
Арçури пек ахăрса,
Пин шăпăрпа шăлнă пек,
Шурă юра вĕçтерсе
Çил улать те шăхăрать.
Çĕрпе уйăх хушшинче
Вĕри çĕлен пек ярăнса,
Çуркуннехи авăрти
Пăрлă шыв пек пăтранса,
Хулăн тискер пĕлĕт чупать.
Курăнми уйăх çуттипе,
Вут та кăвар хĕмĕ пек,
Юр сирпĕнни палăрать.
Çăвар уçма-сывлама
Нимле май çук: юр кĕрет,
Вĕрсе, сурса лартнă пек,
Куç лупашки питĕрнет.
Шăнса кайнă ал-ура,
Вăпăр карчăк тытнă пек,
Хытса каять, тапранмасть.
Темĕн ывăтса ярас пек:
Çилĕ вĕрет уласа,
Вăй чавăхса çитнипе
Пĕлми пулса çуран çын
Кайса ўкет кĕрт çине.
Çав вăхăтра йăсăрка
Шыв хĕрринчи патака
Хăйăр хывса кайнă пек,
Çынна пытарса каять...
Уй варринче пĕр çуна

Пырать путса, чӳхенсе,
Лаши тăрăх тар юхать,
Тарпа хутăш шыв юхать.
Лаши ывăнни паллах —
Хулăн çемçе кĕрт çинче
Аран пырать хашлатса.
Тăлăп çухи тăратнă
Ларса пырать хуçийĕ.
Юрă юрлать, кăшкăрать.
Çил-тăманпа ятлаçать,
Чăпăрккапа лашине
Тиверткелет хушăран.
«— Ой-ой урлă каçрăмăр та
Сарă тулă пуссипе,.
Вăрман витĕр тухрăмăр та
Вĕрене çулçи çуттипе,
Хăта килне кĕтĕмĕр те
Хăта пуç кукши çуттипе...» —
Тесе юрлать кăшкăрса.
«— Манăн мĕншĕн кулянас
Матур лаша пур çинчен,
Çил-йăсăрка пулсан та
Çавах киле çитĕпĕр...
Эй, халĕ, атте лаши!..
Аяр-аяр-аяра!..»
Кам чĕмери хушнă-ши
Тăман витĕр çӳреме
Уй варринче ку çынна?
Çитменнине, çурçĕр халь...
Ырра сисмен пулĕ вăл,
Усал сывлăш астарса
Хăваласа кăларнă пуль
Уйра çул-йĕр çук çĕрте
Аташтарса çӳретме,
Унтан шăнтса вĕлерме...
Кутсăр-пуçсăр çил-тăман
Тĕнче тăрăх кустарать.
Пин шăпăрпа шăлнă пек,
Шурă юра вĕçтерсе
Çил улать те шăхăрать.
Пĕр-пĕринпе хутшăнса
Хулăн пĕлĕт çаврăнать.
Курăнми уйăх çуттипе,
Вут та кăвар хĕмĕ пек,
Юр сирпĕнни палăрать...